26-70

Ҫаваш Республӗкӗнҫи Ҫӗр Ӗҫ Комиссариаҫӗ.

Е. Ф. ЛИСКУН

# СУРӐХ УСРАМА ТӐРӐШӐР

ҪӐВАШ РЕСПУПЛӖКӖНҪИ КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ
ШУПАШКАР 1926

Е. Ф. ЛИСКУН

# СУРĂХ УСРАМА ТĂРĂШĂР

Ф. К. КУÇМИН куçарнă
Ретактăрĕ М. П. ПЕТРОВ

ÇĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНÇИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР — 1926 ç.

Отпечатано в типографии школы Ф.З.У.
Чебоксары, Чувашлит № 589. Зак. № 228
Тираж 3000 экз.

# Сурӑх усрама тӑрӑшӑр.

1916-мӗш ҫулта Раҫҫейӗн 49 кӗпӗрнинҫе 64 мӗлйуна йахӑн тӗрлӗ йышши сурӑхсем пулнӑ, ҫапла кашни 100 ҫын пуҫне 59 сурӑх пулнӑ. Ҫакӑн ҫухлӗ сурӑх ҫылай пек туйӑнаҭ, анҫах вӑл ҫителӗхлӗ мар. Анкли*) пирӗн ҫӗр-шывран пилӗк хут пӗҫиккӗ пулсан та, унӑн 1914-мӗш ҫулта 28.586.096 сурӑх пулнӑ. Унти сурӑхсем тата йеплисем?! Анклири сурӑхсем шултӑрарах та, йӑвӑртарах та, вӗсене виҫҫе пӑхсан, пирӗн 64 мӗлйун сурӑхран ашне те, ҫӑмне те нумайтарах параҫҫӗ мӗн. Ҫапла пӗҫӗкҫӗ Анклирех сурӑхсене пирӗн патринҫен нумайтарах пӑхса усраҫҫӗ. Анклире ҫапах та сурӑхсем ҫителӗклӗ мар, ҫавӑнпа 1913-мӗш ҫулта акӑлҫансем ытти патшалӑхсенҫен 17.225.000 пӑт сурӑх ашӗ, 22.251.000 пӑт ҫӑм илнӗ. Пирӗн ҫӗр-шыв аслӑ, сурӑха ӗрҫетсе йышлӑлатмалӑх пур, сурӑх ашӗпе ҫӑмӗ хамӑр Респуплӗке кирлинҫен

*) Кунта Анкли тесе икӗ тинӗс уттине анҫах калан̆ӑ. Пӗринҫе акӑлҫансемпе шотлантсем пурӑнаҫҫӗ, тепӗр уттипе Ирланти теҫҫӗ,

ытлашши пулсан, йут патшалӑхсене сутса йама пулать вӗт. Пирӗн Респуплӗксен Сойусӗнче сурӑх ӗрчетме мӗн чарса тӑрать? Кун ҫинчен тӳрех каласа пама май килмест, мӗншӗн тесен, Раҫҫейре тӗрлӗрен вырӑнсем пур. Кӑнтӑрти ҫеҫен-хирсенче меринос йатлӑ*) сурӑхсене сахаллантарса пыраҫҫӗ, мӗншӗн тесен, меринос та тыр акнӑ чухлӗ тупӑш параймасть, ҫавӑнпа ӗлӗк сурӑх усранӑ ҫарансене сухаласа тулӑ акса пыраҫҫӗ. Ытти ҫӗрте те Раҫҫейре ҫарансене сухаласа пынӑ пирки сурӑхсем сахалланса пыраҫҫӗ. Хӑш-хӑш ҫӗрте тата хайар чир-чӗрсем ватӑ сурӑхсене те, путеккисене те пӗтерниппе сурӑх уссине пӗтӗмпех ҫухатнӑ. Анчах ман шухӑшпа чир-чӗр те, ҫарансене сухаласа сахаллатни те сурӑх усрас ӗҫе канҫӗрлемелле мар. Пирӗн ӗҫе мӗн чарса тӑнине пӗлес тесен, ӑна йепле йусас тесен, пирӗн тӗплӗрех шухӑшласа пӑхас пулать. Хамӑрӑн Сойусӑн хуҫайствине пулӑшас тесен, сурӑхсене нумайлантарни питӗ кирлӗ. Сурӑх вӑл — ҫӑм та, тир те, ҫу та, аш та парать, хӑш ҫӗрте сурӑхӑн сӗчӗпе те пысӑк усӑ кураҫҫӗ. Пирӗн сурӑх ашне ӗне ашӗнчен кайарах хураҫҫӗ. Анчах вӑл тӗрӗ-

*) Меринос — хаклӑ ҫӑм паракан сурӑх,

сех мар пулмалла, мӗншӗн тесен, ватӑ сурӑх ашӗ ҫеҫ наҫар пулать. Ҫамрӑк сурӑхпа така ашӗ ӗне ашӗнҫен пӗртте кайа мар. Акӑлҫансем аш-пӑш лайӑххи наҫаррине такамран та лӑйӑхрах ҫухлаҫҫӗ, вӗсем сурӑх ашне сыснапа ӗне ашӗпе танах хураҫҫӗ, хӑш ҫухне сурӑх ашне маларах та хураҫҫӗ. Ӗлӗк мериноссен ашне пуринҫен те тутлӑмартарах тесе шутланӑ, халӗ франтсуссем ҫамрӑк мериноссене ҫӗртсе пусса пӑхнӑ та, вӗсен ашне те питӗ лайӑх, теҫҫӗ. Ҫапла ҫамрӑкрах сурӑхсене пусса тӑрсан, сурӑх ашне лайӑха, ҫапла кӑлармa пулать. Ҫамрӑк сурӑх ашӗ туса пыни ку вӑхӑтра питӗ пулӑшмалла, мӗншӗн тесен, вара епӗр сӗтлӗ ӗнесене ҫыслӑрах усрама пултарӑттӑмӑр, вӗсене пусса ҫимӗттӗмӗр. Халӗ пирӗн сӗт-турӑх паракан выҫӑхсем те ҫителӗклӗ мар, вӗсене те ҫавӑнпа нумайлатма тӑрӑшӑс пулать. Ҫамрӑк сурӑха усрасси питӗ тупӑшлӑ ӗҫ, мӗншӗн тесен, вӑл, ӳт хутшӑннӑ ҫухне, апат нумай ҫимест.

Сурӑха аш тума усрас пулсан, акӑлҫансен аш ытларах паракан йышши сурӑхсем питӗ лайӑх. Акӑлҫансен сурӑхӗ вӑл питӗ хӑвӑрт ӳсет. Ҫас-ҫасах 9 уйӑхри ҫӗртнӗ

сурӑхсем 5 пӑта йахӑн ашпа ҫу параҫҫӗ. Ӱт хушса мӑнтӑрланас йенҫен ҫав сурӑхсем сыснасенҫен те ирттереҫҫӗ: пӗр кӗрепенкке ӱт хушма, вӗсене сыснасенҫен икӗ хута йахӑн апат сахалтарах кирлӗ. Унтан тата вӗсене ҫемҫе, тутӑ апат—тырӑ анҫах мар—улӑм пек хытӑ апат та усӑ парат (сысна улӑм таврашне ҫисех каймаст). Анҫах акӑлҫансен сурӑхӗсем пирӗн патӑрти климӑта *) тӱсеймесӗр, хӑйсен лайӑхлӑхне ҫухатма пултарнине манма йурамаст. Ҫапах та унпӑн халӗ хуйхӑрмаллах мар. Акӑлҫансен сурӑхӗсем хӑйсем патӗнҫе Анклире мӗнле тупӑш панӑ пирӗн патӑрта та ҫавӑн пекех тупӑш паҫҫӑр тесе ӗлӗк питӗ тӑрӑшнӑ. Анҫах вӗсене пирӗн патӑрта та Анклири пекех хӑварма питӗ хӗн. Кунта акӑ ҫапла пулмалла. Акӑлҫансен такине хамӑр сурӑхсем патне йарса ҫӗн йӑх кӑлармалла, вара ҫапла пулнӑ путексене ӱстерсе аш тумалла. Американсем ҫапла туса темӗн ҫухлӗ нумай сурӑх ӗрҫетеҫҫӗ, темӗн ҫухлӗ аш-пӑш туса усӑ кураҫҫӗ.

Акӑлҫансен ку сурӑх анҫах мар, ытти су-

*) Климӑт —тесе ӑҫта ҫанталӑк мӗнле тӑнине калаҫҫӗ. Ҫӑваш Республӗккӗнҫе ҫӑмӑр сахал ҫӑват. ҫавӑнпа тинӗ климӑтлӑ теме пулат ун ҫинҫен.

рӑх вӑрлӑхсем те пире нумай уса пама пултараççĕ. Пирĕн Раççейрех хӑш вырӑнсенче хамӑрӑнах лайӑх йышши сурӑхсем пур. Кӑтартса каласан, ака çаксем: куртуклисем, *) маличсем, волошсем, тушпинсем, чыкайсем, романовскисем, тата ыттисем те. Хӑш вырӑнта мĕнле вӑрлӑх усрама май килет, çавӑн йышши сурӑха усраççĕ. Сурӑха ашăшĕн анчах мар усраççĕ, ытти йапалисемшĕн те усраççĕ: тирĕшĕн, лайӑх çӑмӑшĕн, хӑш çĕрте сечĕшĕн те. Хӑш сурӑхӑн çӑмĕ лайӑх, ун вырӑнне аш начар пулма пултарать, хӑшĕн тирĕ, хӑшĕн тата сечĕ лайӑх пулма пултарать. Кашни хуçалӑх хӑйне кирлĕ йышши сурӑх ӑçтан тупма пултармаллине кӑтартмашкӑн епĕ кунта ӑçта мĕнле вӑрлӑх усранине каласа парап. Малтан каракуль сурӑх çинчен каласа парам. Каракуль текен сурӑх вӑл питĕ час ĕрчекен, сивĕрен хӑраман выльӑх. Ытти вӑрлӑхсемпе хутӑштарса çĕнĕ вӑрлӑх кӑларсан, çав каракульпа ытти сурӑхран пулнӑ çĕнĕ вӑрлӑх, час ӳссе çитсе, лайӑх аш парать. Каракуль сурӑх сивве лайӑх тӳссет, ӑнчах нӳрлĕ вырӑна тӳсеймест, ӑна выртма типĕ вырӑн кирлĕ. Пирĕн кӑнтӑрти тата кӑнтӑрпа хĕвел-тухăçри

*) Куртук тесе — пысӑк хӳрелле сурӑхсен хӳрине калаççĕ.

кĕпĕрнесенђе пурăнакан вăрăм йе кĕске хӳ-
реллĕ сурăхсем пурт̆е караккуԓ такинђен лайăх путексем туса параççĕ. Çав путексен тирĕ те, ашĕ те питĕ лайăх пулат̆. Епĕ акă çак хуçайствăсенђен караккуԓ сурăх усраса усă курнине пĕлетĕп:

1) Штумпф хуçайстви, Омск хулинђе 2) 32-мĕш уђаскăра: Аçтăрхан кĕпĕрни Пыккăв йал. 3) Репеђ хуçайстви, Воронеш кĕпĕрни, Сатонски. 4) Куђино хуçайстви, стантси Опиралăвккă, Мускавпа Ђул-хула ђукăн çулĕ çинђе. 5) Мариински çĕр-ĕçĕферминђе, поштă уйрăмĕ Николаевски—Короток, Саратăв у. 6) Скорлятка хуçайстви, поштă стантси Поповккă, Çенкилей уйесĕ, Ђĕмпĕр кĕпĕрни. 7) Ђĕмпĕрте çĕр-ĕçĕ ферминђе, Ђĕмпĕр, пуштă йешђĕк 20-мĕш. 8) Кинт̆аккăвкă хуçайстви. Ђĕмпĕр патĕнђе.

Караккуԓ сурăх сĕтлĕ пулат̆, çанпа ытти сĕтлĕ вăрлăхсемпе хутăштарса çĕнĕ вăрлăх кăларсан, çав çĕнĕ вăрлăх та сĕтлĕ пулат̆, сĕтлĕхне çухатмаст̆.

Акăԓђансен ашлă-çăмлă сурăхсемпе*) ашлă**) сурăхсем хăвăрт ӳсеççĕ, кĕрепенкке аш

*) Ашлă-çăмлă тесе ашĕ те, çăмĕ те лайăх сурăхсене калаççĕ.
**) Ашлă сурăх тесе ашĕ анђах лайăх вăрлăхсене калаççĕ. Вĕсен çăмĕпе тирĕ нађар (Куçаракан).

(ўт) хушма апат ытти сурăхсенђен сахалтарах пĕтерессĕ, вĕсен апĕ те питĕ тутлă. Унтан тата вĕсем çителĕхлĕ лайăх çăм парса тăраççĕ. Пусађђен турттарса пăхсан, сурăхĕсем 7—8 пăта йахăн, такисем 10—11 пăта йахăн пулаççĕ. Акăлђансен икĕ тĕрлĕ сурăхсем пур: 1) кĕске çăмлисем 2) вăрăм çăмлисем. Вăрăм çăмлисам питĕ шултăра, йăвăр пулаççĕ, кăсенђен акă çапла йатлисем пур: лейçтер (кунăн такине мериноспа сиктерсен, питĕ лайăх ашлă лайăх çăмлă путексем пулаççĕ), линкољн (30 кĕрепенкке çăм парать, йăвăрăшĕ 9 пăт) порттер-лейçтер, котсвољт, ромни-марш*). Çак вăрăм çăмлă сурăхсем ђас çитĕнеççĕ, шултăра пулаççĕ, вĕсем ăшăрах çĕрте питĕ лайăх çарансем çинђе анђах лайăх пурăнма пултараççĕ. Вĕсен такисене ытти сурăхсемпе сиктерсе çĕнĕ вăрлăх тăвас пулсан, çав çĕнĕ вăрлăх путекĕсене питĕ лайăх çитерсе усрамалла, унсăрăн вĕсем ўсеймеççĕ, начар пулаççĕ. Кĕске çăмлисем акă çаксем: соустаун, кемширтаун, оксфортаун, шропшир, суххољк. Кусем вĕри

*)Кусене пурне те каламасăр ирттерме май килмест. мĕншĕн тесен, хăшĕ те пулсан пирĕн ђăваш сурăхне лайăхлатма кирлĕ ĕ тетĕп. (Куçаракан.)

типĕ климăта тӳсемлĕскерсем, çаванпа пирĕн кăнтăрти кĕпĕрнесенҫи сурăхсемпе лайăх вăрлăх памалла, пирĕн Раççей варĕнҫи кĕпĕрнесенҫе те вĕсем пуранма пултармалла.

Акăлҫансен йышши сурăхсене ака çакă хуçайствăсĕнҫе усраççĕ:

Линкол̧ сурăхсене: 1) Мариински çĕр ĕçĕ ферминҫе, Николаевскăй Короток, Саратту кĕпĕрнипе уйесĕ. 2) Çмеево хуçайстви, Ҫыстай хулинҫе, Тутар респуплĕкĕнҫе.

Оксфорширтаун сурăхсене: 1) Нартаски çĕр-хуçайстви шкулĕнҫе, Тутар респуплĕкĕнҫе. 2) Никăнăвски йатлă йал çумĕнҫи хуçайствăра, Проннитс уйесĕнҫе, Мускав кĕпĕринҫе. 3) Марйино йатлă йал çумĕнҫи хуçайствăра, ст. Становăй-Колотеç Мускавпа-Курск ҫукăн çул̧ çинҫе. 4) Ал̧ошшино хутăрĕ, Сарайски хули, Ресан̧ кĕпĕрнинҫе.

Шропширтаунски сурăхсем: 1) Веçма хуçайствинҫе, Колитсын стантси, Свеникорот уйесĕ, Мускав кĕпрĕни.

Соуставски сурăхсем: 1) Коловкково йалĕнҫе, ст. Куҫково Верейски уйес, Мускав кĕпĕрни. 2) Пореҫйе йатлă йал çумăнҫи хуçайствăра, Мошай уйесĕ, Мускав кĕпĕрни.

Ромни-марш текен сурăхсене: 1) Кинелри çĕр ĕçне вĕрентекен шкулра усраççĕ, ст. Кинел, Самар кĕпĕрни.

Сурăхсене апăшĕн усрас пулсан, хуй те хăçан та акăлҍҍансен сурăхсен такисене ытти сурăхсемпе сиктерсе путек тутарма йурат. кунта çав путексене лайăх çитерсе ӳстермелле астуса тăмалла, çавăнпа ăçта апат йунĕ çĕрте çавăн пек тумалла. Ашран пуçне тата лайăх çăм, лайăх тир те илес шухăш пулсан, акăлҍҍансен ăратлăх такипе сиктерсе çĕнĕ вăрлăх кăларма йурамаст. Куна ытларах калаçа ăнлантарам. Кам та пулсан хамăр романовски сурăха акăлҍҍансем линколҍн такипе сиктерсе путек тутарсан, путексем шултăрарах пулĕç, анҍах çăмĕ, тирĕ романовски тир пек лайăх пулаймĕ. Унтан тата акăлҍҍансен такисем пирĕн сурăхсемпе питех сикме йуратмаççĕ, çавăнпа кĕтӳре хĕсĕр йулакан сурăхсем нумай пулаççĕ.

Акăлҍҍан сурăхĕсен путеккисене питĕ лайăх çитерсе усрасан тин нумай усă пама пултараççĕ, çавăнпа вĕсене сурăх ашĕ хаклă, пасар инçе мар çĕрте анҍах усрама май килет.

Хаљхи вăхăтра сурăх ашĕн хакĕ лайăх, аш нумай кирлĕ, çавăнпа çĕр ĕçлекенсене сурăх нумайтарах усрама калатăп. Сурăх усрамашкăн пирĕн хирсене курăксем, тымар çимĕçсем, тата ытти выљăха памалли тĕш тырăсем акма тытăнас пулаĭ. Çавăн пек тусан, пирĕн сурăхсене сахалатмалла пулмĕђђĕ, мĕншĕн тесен, курăк-тымар çимĕçсене ака пуçласан пирĕн выљăх апађĕ нумайланĕђђĕ. çавăнпа выљăхне те нумайтарах усрама май килеђђĕ. Кăнтăрла йенђи çеçен хирсенђе кашнă теçеттин çаранра 2—3 меринос сурăх анђах усрама пултарнă. Çавăнпа та тулă аксан, тупăш сурăх усранинђен нумайтарах пулнă пирки, сурăх усрас ĕç хĕвел тухăççĕ йенелле, çĕр ирĕклĕрех йенелле шуса пыраĭ. Епĕр тырăпа хутăш курăк, тымарçимĕç акма вĕренсе теçеттинĕрен 7—8 сурăх усрамалăх курм иле пуçланă пулсан, çавăн пек пулас çук-ђĕ. Вара çеçен хирти çынсем тырă акса та, хаклă çăмлă сурăх усраса та усă курнă пулĕђђĕç. Унтан тата сурăха çăмĕшĕн анђах мар, ашĕшĕн те усранă пулсан, пирĕн меринос сурăхсем сахаланса йулас çук-ђĕ. Меринос усракан хуçайствăсем ку таранђђен акă çаксем пулнă:

1) Линейни йатлă йал çумĕнђи хуçайствăра, Аçтăрхан кĕпĕрни, Линейни йалĕ. 2) Паниђкин хуçайствинђе, Аçтăрхан кĕпĕрни. 3) 32-мĕш уђастăк Пыккăв йалĕ, Аçтăрхан кĕпĕрни 4) Михайлăвкка хуçайствинђе, ст. Лунино, Мускавпа—Хусан ђукăн çулĕ çинђе, Мокшан уйесĕ 5) Ђернышев хуçайстви, Никкољски—Поим пуштă пайĕ, Ђемпарски уйес, Пенсă кĕпĕрни. 6) Ироновски хуçайствă, Паты йатлă йалта, Аткарск уйесĕ, Саратту кĕпĕрни.

Меринос—рампуљйе текен сурăхсене акă çак хуçайствăсенђе усраççĕ: 1) Каменски хуçайствинђе: Каменкка, Нишнă-Ломовскăй уйес, Пенсă кĕпĕрни. 2) Попповкă хуçайствинђе, Пăхăрăслан уйесĕ, Самар кĕпĕрни.

Çăм хакĕ ӳссе пыни сурăх усракансене мериноссене ђакарма мар, нумайлантарма та пулăшмалла, анђах мериноссене урăхлăрах çитерсе усрама вĕренмелле, унтан тата лайăх аплă меринос усрама пуçламалла. Ашĕ те, çăмĕ те лайăх мериноссем пур; вĕсене: меринос—рампуљйе теççĕ. Çак вăрлăха усрани усă нумай памалла.

Халĕ фапрăксене питĕ нумай çăм кирлĕ,

аш хакĕ ӳсе пырать, ҫаванпа ҫамĕ те, ашĕ те лайăх мериноссене усрама пуҫламалла. Сурăхсене ҫитерсе ӳстерес ĕҫе пĕтĕмпех урăхлатмалла. Ку шухăшпа ăнлантарма пĕр пĕр хуҫайствă илĕпĕр те, унтан мĕн ҫухлĕ тупăш илнине шутласа пăхăпăр.

Пĕр хуҫайствăн 6 теҫеттин ҫĕр пур тейĕпĕр, вăл хуҫайствă Тулҫски кĕпĕрнинҫе тейĕпĕр. Вăл виҫĕ пусăллă хуҫайствă пулсан, вара 2 теҫеттин хĕл каҫакан (озимая) тулă айĕнҫе пулать, 2 теҫеттин сĕлĕ айĕнҫе, 2 теҫеттин тата хура пуса. Кун пек хуҫайствăра, ватамран шутласан, теҫеттинрен тулă 63 пăт, сĕлĕ 59 пăт тухмалла. Хĕл каҫакан тырран (ырашăн, тулăн) уламĕ тĕшĕнҫен икĕ хут нумайтарах пулать, арпи 20%, ҫур тыррин уламĕ тĕшĕнҫен $1^1/_2$ хут ытларах, арпи-пуҫахĕ 20% пулать. Ҫакна пĕлсен, епĕр ҫак хуҫайствăра мĕн ҫухлĕ тырă, мĕн ҫухлĕ улăм, мĕн ҫухлĕ арпа тухнине шутласа кăларма пултаратпăр. Икĕ теҫеттин тулă аксассăн, пирĕн 126 пăт тырă, 252 пăт улăм, 50 пăта йахăн арпи-пуҫахĕ тухать. Тепĕр 2 теҫеттинĕнҫе 113 пăт сĕлĕ, 178 пăт сĕлĕ уламĕ, 35 пăт арпа-пуҫах тухать. Ҫапла вара выльăх-ҫĕрлĕх валли мĕн

пурё 178 пăта йахăн çур тырри уламĕ, 85 пăт арпа-пуҫах йулаҫ (хĕл касна тырăн уламĕ хытă, выљăха питех пысăк усă парас çук, çавăнпа ăна шутлама та кирлĕ мар). Çав ултă теçеттин çĕре нумай пусăлă тусан, тыра-пула та выљăх апаҫĕ те нумайтарах пулмалла. Тăвата пуса туса, тулă хыççăн выљăх валли хĕрлĕ кăшман (ҫĕкĕнтĕр) акса пăхсанах (хура пусă, хĕл касакан тырă—ыраш йе тулă, хĕрлĕ кăшман тата сĕлĕ), тырă та çителĕхлĕ пулаҫ, кăшманĕ теçеттинрен 2.000 пăта йахăн пулаҫ. Вара тулă та, сĕлĕ айĕнҫе çĕр сахал пулсан та, тырри сахал пулмасҫ, мĕншĕн тесен, выљăх апаҫĕ (кăшман) пулнипе тислĕк те нумайтарах пулаҫ те, çемçетнĕ çĕр çинҫе тыра лайăхрах пула пуçлаҫ. Санаса пăхнă тăрăх, тислĕк тăкса пырсан, теçеттинре тулă, вăтамран шутласан, 124 пăт тухаҫ, сĕлĕ 112 пăт. Халĕ ĕнтĕ кашни пусăра $1^1/_2$ теçеттин анҫах пулаҫ. Тыра-пула, пĕтĕмпех шутласан, акă çакăн ҫухлĕ пулмалла: тулă 186 пăт (124 п + 62 п) уламĕ 372 пăт арпи-пуҫахĕ 75 пăт, сĕлĕ 168 пăт. сĕлĕ уламĕ 252 пăт. сĕл арпи-пуҫахĕ 50 пăт, тата 3000 пăт хĕрлĕ кăшман. Выљăхсем валли

252 пăт сĕл улăмĕ, 125 пăт арпа-пуђах, 3.000 пăт хĕрлĕ кăшман лекет. Кун пек тусан, выљăхсене питĕ лайăх пулĕ, ĕçлекен те пĕртте хуйхăрмĕ, мĕншĕн тесен, унăн тырă ĕлĕкхинђен нумайтарах пулĕ. Кун пек тусан, тырă нумайтарах тухнинђен пĕртте тĕлĕнмелле мар, тымар çимĕç аксан, тырă лайăхрах пулнине çĕр ĕçлекенсем такçанах сиснĕ. Уйа тата нумайтарах пусăлă туса курăксем те ака пуçласан, çав çĕртенех усă татах та нумайтарах пулĕ. Тырă айĕнђи çĕр сахаланаť пулсан та, тырă лайăх пулнипе тĕш тырă малтанхи ђухлех пулса пыраť, тата выљăх апађĕ темиçе хут нумайланаť. Полтаври сăнавлă хирте теçеттинрен љутсернă *) ути 210 пăт, сĕлĕпе виккă **) акса тунă ута 257 пăт, мокар ***) 284 пăт, çăмлă виккă ырашпа пĕрле 292 пăт парса пынă, çав вăхатрах Полтав кĕпĕрнинђе кашни теçеттин çарантан 60 пат утă анђах çулса илсе пынă, питĕ лайăх нӳр нумай çарансенђен те 105 пăт çеç илсе пынă. Çакна вуланă ђух, тата акса тунă утă çаран утинђен пĕр икĕ хут лайăхрах-

*) Љутсернă—виçшер çулçăлă курăк. Тымарне тарăна йаннпе тип, уйар çул та лайăх ӳсет.

**) Виккă—ђăвашсем тăрна пăрçи текен курăк йевĕрлĕ.

***) Мокар—шур утй пек курăк.

хӥне, вӑл таса пулнине манма ӥурамаст̆ курӑк акнӑ хыҫҫӑн тырӑ та икӗ хут лаӥӑхрах пулат̆, ӑна та астуса тӑмалла. Курӑк, тымар-ҫимӗҫ акса, сурӑхсене лаӥӑхрах пӑхса ӳстерсе, ђӗртсе сутса нумаӥтарах усӑ курма пултарни хаԓ палла пулђӗ ӗнтӗ. Тырӑ акаӥмасӑр пулнӑ ҫӗрсене пӗр ҫулта ҫитӗнекен курӑксем акса ӳстерме пулат̆, вара выԓӑх апађӗ татах та нумаӥланат̆ (ҫакӑ пӗр ҫулта ҫитӗнекен курӑксем: сӗлӗпе виккӑ, мокар, ӥасмӑк, ҫамлӑ виккӑ, вир, куккурус *), сорко **), каоԓан ***) ҫурхи ыраш, вӗсене ђеђеке ларсан ҫулмалла). Ҫавӑн пек курӑк акнӑ ҫӗре выԓӑха тӳрех ӥама пулат̆, киле тавӑрнсан кӑштах тутлӑ ҫимӗҫ: 1 кӗрепенкке ҫӑнӑх сӑсӑлӗ, ӥе ҫур кӗрепенкке шмых [4]) парса пырсан выԓӑха ђасах ђӗртсе ӥама пулат̆, 8—9 ернере сурӑхсем ђӗрӗлсӗ ҫитеҫҫӗ.

*) Куккурус питӗ вӑӥлӑ ӳсекен курӑк. Унӑн вӑрри ҫӑнӑх тума, кӗрпе тума каӥат̆. Ђӑваш респуплӗкӗнђе вӑл пулса ҫитеӥмест, анђах ҫулҫисене лаӥӑх сарат̆, выԓӑх валли акма килӗшмелле. Урӑх тӗслӗ ӑна маис теҫҫӗ.

**) Соркопа каоԓан иккӗшӗ те вир ӥевӗрлӗскерсем. Сорко текеннине Аҫтӑрхан, Саратту кӗпӗрнисенђе акаҫҫӗ. Каоԓана ӗлӗк Китаӥра, Кореӥра, Мантшуринђе акнӑ. халӗ кунта та аккаласа пӑхаҫҫӗ. вӑл ӑшӑрах вырӑнта лаӥӑх ӳсет.

4) Шмых—ҫу кӑларнӑ хыҫҫӑн ӥулакан ђуста.

Сурăхсене кантăрапа кăкарса çитерме вĕрентсен, сурăх усрас ĕç тата пысăкрах усă парать. Кашни сурăха кантрапа кăкарса хурсан, вăл çав вырăнти курăка тĕпĕнџенех çисе йарать те, вара тин ăна тепĕр çĕрĕ куçарса унта та çавăн пекех курăка тĕпрен çитерме пулать. Кăкарса çитерсен, курăк та перехетлĕ пулать, ĕçе те (çулса панинџен), сахалтарах сурăхсем кăкарăнса çиме џасах вĕренсе çитеççĕ. Кăкарса çитерме вĕренсен пĕџик хуçайствăсем те пахџа хĕррисенџе, çул тăрăх çитерсех џылай сурăх џĕртме пултараççĕ. Вăл ĕçе çамрăк аџасене тутарма пулать. Çавăн пек кăкарса усрама вĕренни сурăх усрас ĕçе мала йама пултарĕ, сурăхсене нумайтарах усрама пулăшĕ, тесе шухăшлатăп епĕ. Сурăх вăл џас ўсекен выљăх, çавăнпа халџхи аш çитменнипе аптăранă вăхăтра сурăх пире питĕ пысăк усă пама пултарать, апат наџаррипе, аш çуккипе аптăрама памасть, çавăнпа сурăх усрасси çинџен халџ питĕ шухăшламалла, ытларах сурăх усрама тăрăшмалла.

Сурăх усрама май килнине, вăл кирлине, усă панине пĕлтĕмĕр, халĕ тата сурăх усраса пурăнакан районсем çинџен каласа кăтар-

тăпăр. Çав районсенҫе паллă вăрлăхсене сурăççĕ: куртуклă сурăх (ăна хăш çĕрте ҫунтук теççĕ, хăш çĕрте тата маныҫ сурăххи, калмăк сурăххи, ортын сурăххи, крек сурăххи теççĕ), волош сурăххи, ҫыкай сурăххи, малиҫ, тушшин, караҫай. тата ыттисем те. Статтистик кăтартнă тăрăх 1913-мĕш çулта Аçтăрхан кĕпĕрнинҫе кашни 100 çын пуçне 200 сурăх пулнă, Семиреҫ йе (Çиҫĕ шыв) оплăçĕнҫе 383 сурăх, Капкас хыçăнҫи оплăçра 359, Çемипалаттински оплаçĕнҫе 252, Сыр-Тарйе оплаçĕнҫе—245, Урал оплаçĕнҫе 224. Сурăх тата акă çак оплăççемпе кĕпĕрнесенҫе нумай: Пайккал хыçĕнҫи оплăçра, Акмолинск, Тифлис, Карск, Такестан, Ставропољски, Оренпурк кĕпĕрнесенҫе. Çак каласа тухнă кĕпĕрнесемпе оплăçсенҫе сурăха ĕрҫетсе, ăна çитерсе ҫĕртсе, аш тумă çинҫе тăрсах тытăнмалла. Çав кĕпĕрнесенҫе пуринҫен ытларах сурăх усрас ĕç çине пăхмалла, мĕншĕн тесен, унта хăш çĕрте сурăх усрама анҫах йурăхлă вырăнсем пур. Çав сурăх усракан районсенҫе халĕ те хăш-хăш çĕрте пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçса çӳрекен сурăх хуçисем пур, вĕсен сурăхĕсем хĕлле хăйсен валли апат йур айĕнҫен

ђавса тупаççĕ, çавăнпа çанталăк сивĕ пулсан, йур пăрланса кайнă пулсан, сурăхсем пинĕ пинĕпех выçă вилсе пĕтеççĕ. Çавăн пек çĕрте сурăхсем валли хĕл касмалăх утă, хӳтĕ вырăнсем (картасем) хатĕрлемелле. Хĕлле валли утă хатĕрленипех тем ђухлĕ сурăха выçă вилĕмрен хăтарма пулаť.

Аш кирлĕ çĕр е, вăл лайăх кайнă çĕрте анђах сурăх усрани пысăк усă параť. Çавăнпа сурăх ашĕ хуласене, тата йут патшалăхсене кайтăр тесен, сивĕ вакунсем, шăнтакан склатсем *) тумалла. Хамăрăн правиттĕљсвăта çар валли питĕ нумай аш илет, çавăнпа кирлĕ таранђђен шăп акан склатсем тумалăх укçа та параť. Çак шăнтакан склатсем тăвас ĕçе аслăлатни нумай усă памалла, мĕншĕн тесен, сутмалли лайăх вырăн пулсассăн, сурăх ӳстерсе аш тăвас ĕçе пĕр хăрамасăр вăйлăлатма пулаť.

Малашне сурăха мĕнле çитерсе усрамалли çинђен каласа парăп. Сурăх апата та вырт-малли вырăна та тиркекен выљăх мар, анђах сурăха тиркекен мар выљăх тесе нађар, сахал çитерсе усрама йурамасť. Сурăх хăйĕн тис-

*) Шăнтакан склатра аш пĕр майах шăнса пăрланса тăнипе пăсăлмасť.

лӗкӗ ҫинҷех хӗл каҫма пултарать, пӑртак анҷах ҫӗн улӑм сарса пымалла. Унӑн шӑкӗ нумай пулмасть; пӑхӗ те варалаканскер мар, ҫавӑнпа вырӑн ҷас йӗпенмест.

Кӗркунне, сурӑхсене хупса усрама пуҫлас умӗн, сурӑх карти урайне пӗр вершук хулӑнӑш кӗл сармалла, вара кӗл ҫине улӑм сарса хумалла. Кӗл сурӑх шӑкне сӑхса илсе, ӑна ҫӗрме ҷарать, унтан тата тислӗке лайӑхлантарать. Сурӑх витисене ҫутӑ кӗрекен тумалла, ҷӳреҷесене, алӑксене питӗ тӗплӗ тӑп-тӑп лартмалла, унсӑрӑн, шӑтӑксем пулсан, витӗр тухакан ҫил сурӑхсене питӗ пысӑк сийен куме пултарать. Витере питех ӑшӑ пулмасан та пырать, анҷах витӗр ҫил ан пултӑр, вӑл сурӑхсене пӗтерет. Пӑсӑлнӑ сывлӑш тухса тӑма труба кӑлармалла. Витере сурӑхсене ирӗк усрамалла, кашни сурӑха 2 тваткӑл аршӑн урай лектӗр, путеклӗ сурӑха 2¹/₂—3 тӑваткӑл аршӑн, ҫулталӑкри путексене 1¹/₄ тваткӑл аршӑн та ҫитет. Сырӑшне вырӑнтан вырӑна сиктермелле тумалла, сырӑшӗн тӑрӑшнӗ кашни сурӑха 8—9 вершук такасене 9—12, ҫулталӑкра путексене 6—7, пӗҷӗк путексене 3—5 кирлӗ. Сырӑш урайӗнҷен

10 вершукрăн çŷллĕрех пулмалла мар, айăккисенҫе утă тăкăнасран патаксем лартса тухмалла. Вăрлăха хăварнă хаклă такасем валли, пĕтĕ сурăхсем валли апат памалли вырăн тата ăрасна çĕрте тумалла. Сурăх вити таврă çурхи йур шывĕпе, çумăр шывĕ йухса кайма канавсем ҫавмалла, вара сурăхсем валли типĕ вырăн пулаҭ, вĕсем йĕпене тŷсеймеççĕ. Улăма йе утта пĕҫиккĕн парса пымалла, сурăхсем малтан çемçе пĕрҫĕксене суйласа çийеççĕ, утă трукăх нумай панă пулсан, хытăрах пĕрҫисене çимесĕрех хăварма пултараççĕ те, апат çуррине йахăн ахалех пĕтет. Çавăнпа хăш ҫухне сурăха апат-çимĕçе тиркене выҫăх тесе шухăшлаççĕ. Ирхине парас апата тăвата пайа уйăрса парсан, сурăхсем çимелли сахаллине курса, ăна питĕ ҫас пĕтĕмпех çисе йараççĕ, вара пĕр пайне çисе йарсан, тепĕр пайне парас пулаҭ, çапла вара ирхине парас улăма йе утта пĕтĕмпех çитерсе йама пулаҭ. Сурăхсене улăм нумай памалла пулсан, ăна вĕтетсе касса сăсăлпа хушса памалла. Сăсăл вырăнне тырă: сĕлĕ, урпа, куккурус вĕтетсе пама та йураҭ. Тымар-çимĕçпе *) вĕтетнĕ улăма пĕрле хутăштарса парсан та усă нумай

*)Тымар-çимĕçсем çаксем: кишĕр, çарăк, кăшман

пулаҭ. Сурӑха питӗ таса шыв ӗҫтермелле, вӑл шыв нумаӥ ӗҫмест (хӑӥ ӥавӑрӗшӗн 15-мӗш паӥӗ ҭухлӗ ҫеҫ ӗҫет). Акӑлҭансен ашлӑ сурӑхсем шыва нумаӥтарах ӗҫеҫҫӗ. Апат мӗн ҭухлӗ памалли сурӑх ӥавӑрӑшӗнҭен килет, ӑна ӥавӑрӑшӗн 25-мӗш паӥе ҭухлӗ утӑ памалла. Кӑтартса каласан — сурӑх 100 кӗрепенкке туртаҭ пулсан, ӑна утӑ 4 кӗрепенкке памалла (100 : 25 = 4). Утӑ выранне ытти ӥапаласем панӑ ҭухне, хӑш ҫимӗҫ мӗнле тутӑ тытнине шутласа парас пулаҭ. Тутӑлӑхран*) шутласан, 1 кӗрепенкке ҫӑнӑх 4 кӗрепенкке наҭар утӑ ҭухлӗ тӑраҭ, 3 кӗрепенкке вӑтам утӑ ҭухлӗ, 2 1/2 кӗрепенкке лаӥӑх утӑ ҭухлӗ, 4 кӗрепенкке ҫур-тырри уламӗ ҭухлӗ, 3 1/2 кӗрепенкке арпа ҭухлӗ, 4 кӗрепенкке ҫӗр улми ҭӳхлӗ, 9 1/2—11 кӗрепенкке хӗрлӗ кӑшман ҭухлӗ, 8 кӗрепенкке кишӗр ҭухлӗ, 15 кӗрепенкке ҫарӑк, (выҭӑх ҫарӑкӗ) 15 кӗрепенкке сӑсӑл ҭухлӗ тӑраҭ. Тӗш тырӑ (ыраш, сӗлӗ, урпа, пӑрҫа), тата тип ҫу кӑларнӑ хыҫҫӑн ӥулнӑ ҭуста (шмых) ҫӑнӑхпа пӗрех. Сурӑх 125 кӗрепенкке туртаҭ теӥӗпӗр, вара ӑна 5 кӗрепенкке утӑ (125 : 25 = 5) кирлӗ; апат ҫитнӗ таран епӗр вӑл сурӑха

*) Тутӑлӑхрап шутласан, ҫимӗҫсем пӗр пек мар. 3 кӗр. ҫӑкӑрпа ҫын кун каҫма пултараҭ. Ҫӗр улмине кун каҫма 12 кӗр. ҫимелле. Ҫапла ҫӑкӑрӑн тутӑлӑхӗ ҫӗр улминҭен 4 хут ытларах.

2 кĕрепенкке утă парăпăр, çитменнине ытти апат па пултаратпăр. 3 кĕрепенкке утă 1 кĕр. тĕш тырă ђухлĕ усă параҍ, çавăнпа епĕр утă выранне 1 кĕрепенкке çăнăх, йе пĕр кĕрепенкке сĕлĕ çу кăларнă хыççăн йулнă ђуста (шмых) пама пултаратпăр, 2 кĕрепенкке çуртри улăмпа $^3/_4$ кĕр. сăсăл парсан та çав шутах тухаҍ (2 кĕрепенкке улăм, $^1/_2$ кĕрепенкке çăнăхпа танлашаҍ, $^3/_4$ кĕрепенкке сăсăл та $^1/_2$ кĕр. çăнăха тăрăт, мĕн пурĕ пĕр кĕрепенкке çăнăх ђулђ йе 3 кĕрепенкке утă ђухлĕ усă параççĕ). Такасене сикнĕ вăхăтра ахалђ ђухнехинђен лайăхрах çитермелле, ытти апат панă хыççăн тата талăкра пĕр кĕрепенкке йахăн сĕлĕ парса пырас пулаҍ.

Ђĕртме çитерниĕ ђухне, сурăхсене апат ытларах памалла, вара унăн аш та, çу та хăвăртрах ӳссе пыраҍ. Сурăха мĕн ђухлĕ хăвăртрах ђĕртен, çавăн ђухлĕ усă нумайтарах пулаҍ. Путексене тата лайăхрăх çитермелле. Çамрăк путексем ӳт хушма апат нумайрах пĕтермеççĕ: сăнаса пăхнă тăрăх икĕ уйăхри путексене кашни кĕрепенкке ӳт хушма пĕр кĕрепенкке ытларах çăнăх йе тĕш тыр анђах кирлĕ. 4 уйăхри путексене пĕр

кӗрепенкке ӳт хушма 2,5 кӗрепенкке тутӑлӑх апађӗ*), $5^1/_2$ уйӑхрисене 5 кӗрепенкке тутӑлӑх апађӗ кирлӗ. Мӗн ђухлӗ апат ҫисе сурӑх мӗн ђухлӗ ӳт хупса пынине пӗлмешкӗн, унӑҥ йавӑрӗшне виҫсе тӑмалла. Пӗр ҫул тултарађђен путексем питӗ хӑвӑрт ӳт хываҫҫӗ, ашӗ те вӗсен питӗ тутлӑ пулаӗ. Икке кайнӑ сурӑхсем те лайӑх мӑнтӑрланаҫҫӗ, анђах ӳт выранне вӗсенӗн ҫу хушӑнса пыраӗ. Виҫҫӗрен иртнӗ сурӑхсемпе каснӑ такасем аш хушмаҫҫӗ, вӗсене ҫитернӗ апат пӗтӗмпех ҫу пулса пыраӗ. Сурӑха ђӗртме ҫитерес пулсан, улӑмпа утӑ анђах мар, тата вӗтетне урпа, куккурус, сӗлӗ, пӑрҫа, ыраш, вир, ҫӑнӑх сӑсӑлӗ, тымар ҫимӗҫсем, ҫӗр улми, пурте йураҫҫӗ. Курӑк лайӑх пулсасӑн, сурӑхсене ҫаран ҫинђе пӗр 8—10 ернере ђӗртсӗ йама пулаӗ. Ђӗртес ӗҫ ӑнӑҫлӑ пыма сурӑхсен ђӗрнисене таса тытас пулаӗ, куҫ таврашӗнђи, тата хӳре патӗнђи ҫӑма кассах тӑмалла, ҫарансем ҫинђе (40 ђалӑш сарлакӗш хушӑксем шуса ҫитерсе пымалла, сурӑхсене ирхине выҫӑ ђухне, ӗнерпе-виҫӗм кун ҫинӗ выранта

*) Тутӑлӑх апађӗ вӑл выђӑха ситермелли ҫӑнӑх виҫи. Малтан калани: 3 кӗр утӑ, 4 кӗр. улӑм, 8 кӗр. кишӗр кашниййӗ пӗр ҫӑнӑх виҫи пулса пыраҫҫӗ.

çитермелле те, кайран çитермен çаран çине куçарса пымалла.

Выҫăхсене çынна ĕçме йуракан шыв анҫах памалла. Наҫар шыв ĕçтерсен, сурăхсене пӳсĕр лексе нумай сийен тума пултарать. Лаҫакаллă (шурлăхлă) йухса тăман шывсем пур çĕрте çав пӳсĕр сурăха ҫасах лекет, çавăнпа пĕр вырăнта çĕрсе тăракан шурлăх шывне сурăха ĕçтерме йурамасть. Çавăн пек шурлăх патĕнҫи курăка та çитерме йурамасть, вăл курăкра çитенмен пӳсĕрсем пулаççĕ, вĕсем, сурăх ăшне лексен, пĕвере шăтарса кĕреççĕ те. вара сурах ҫирлет. Хăш ҫухне çав пӳсĕрпе сурăхсем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе вилсе пĕтеççĕ. Çак инкек ан пултăр тесен, сурăхсене килтех шăварса кĕтĕвĕ йамалла, килте май килмесен, аçта та пулсан хирти çăлтан шăвармалла. Ирхине килте ĕçсе тăраннă сурăхсем хирте шывшăн питех кастармаççĕ, çавăнпа наҫар шыва вĕсем ĕçмеççĕ. Акăлҫансен сурăхĕсем çав пӳсертен ҫасрах аптăрама пултараççĕ, çавăнпа вăл вăрлăха усрана ҫухне ăраснах лайăх шыв парассине манма йурамасть. Шурлăх (лаҫакаллă) вырăнта нумай сурăх усрама кансĕр, май та килмест, темелле.

Сурăх путеке ăшра 150—155 кун йăтса ҫӳрет. Сурăха Октіапĕр уйăхĕнђе сиктерес пулат̆, вара путекĕ ҫуркунне пулат̆ те, ăна пăхса ӳстерме ҫăмăлтарах пулат̆. Икĕ ҫул тултармасăр, пирĕн ђас ҫитĕнеймен сурăхсене сиктерме йурамаст̆, ашшăн усракан вăрлăхсене, пĕр ҫул ҫур иртсен, сиктерме йурат̆. Вăрлăха хăварнă такасем 4—5 ҫулђен сиксе пурăнма пултараҫҫĕ. Сурăхсем, 6—8 хут путек амăшĕ пулсан, ватăлаҫҫĕ, вĕсене малашне усрани усă памаст̆ вара. Пĕр така валли кĕтӳре сикнĕ ђухне 35—40 сурăхран ытла тытма йурамаст̆, килте сиктерес пулсан, пĕр така 80—100 сурăха ҫитет. Виҫĕ уйăх тултарнă путексене амăшĕнђен илмелле, вăйлă тут тытакан апатпа усрамалла, амăшĕн сĕт пулсан суса тăма та пулат̆ *).

Ҫакă пĕђĕк кĕнекене пĕтернĕ ђух, хресҫђенсен сурăх усрас ĕҫе малалла кайтăр, вĕсен ĕҫĕсем ăнаҫлă пулђђĕр, тетĕп. Унсăрăн епĕр ҫĕр ҫителĕклĕ пулсан та, ҫуне те, ҫăмне те, тăлине те, йут патшалăхсене йарса сутса тăрас выранне, хамăр вĕсенђен илсе тăраттăр. Малашне ҫавăн пек тумалла ан пултăр.

---

*) Кăркăссем, тата ытти нумай сурăх усракан халăхсем сурăх сĕтĕпђен ђылай лайăх ђăкăт тума пĕлеҫҫĕ.

## Ӳаваш Респуплӗкӗнӳи Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑмӑн хресӳенсене кирлӗ кӗнекесем ҫапӑнса тухрӗҫ.

**Костыӳев** — Тырӑ-пулла уйарпа пӗтесрен йепле сыхламалла . . . . . . . . . 20 п.

**Ҫавӑннах** — Ҫӗрӗҫӗ кӗнеки . . . . . . . . . . . . 80 п.

**Штейнберг** — Хресӳене пуймалли тӳрӗ ҫул. . . 20 п.

**Штрант** — Ҫунатлӑ хӗрлӗ ҫар. . . . . . . . . . 8 п.

**Улитин** — Виҫӗ пусӑран нумай пусса мӗнле куҫмалла . . . . . . . . . . 16 п.

**Скворцов** — Виҫӗ пусса сут туни. (Пӗр пайлӑ пйесса). . . . . . . . . . . 28 п.

**Дернов** — Утарӑн тӗп ӗҫӗсем . . . . . . . . 85 п.

**Никитинский** — Ҫӗр улмине сыхлӑр . . . . . 8 п.

**Скворцов** — Сысна ӗрӳетесси . . . . . . . . 30 п.

**Фридолин** — Выӳӑх-ӳӗрлӗх, ӑна пӑхса усрасси. 20 п.

**Спиченко** — Ҫимӗҫ саӳӗ . . . . . . . . . . 40 п.

**А. Дмитриев** — Ҫаран . . . . . . . . . . . 30 п.

**Иванов** — Уйар ҫӗрте кӗрхи тырра йепле тумалла — п.

**Лискун** — Сурӑх усрама тӑрӑшӑр . . . . . . 12 п.

**Грацианов** — Ҫум куракссене пӗтермелли (ҫапӑнать) — п.

**Крольков** — Йӑвӑҫ пахӳине сийенлекен йапаласенӳен упрас тесен мӗн тумалла (ҫапӑнать) — п.

**Рыжов** — Выӳӑхсем валли тымарҫимӗҫ акса ӳстересси. (ҫапӑнать) . . . . . . — п.

**Губин** — Пусӑ авӑтса унти шыва вараланасран астуса усрасси. . . . . . . 15 п.

**Ростовцев** — Ӗне мӗнле суйласа илмеле тата ӑна йепле пӑхмалла . . . . . . — п.

**Сошественский** — Ҫӗпӗр ӳирӗ (ҫапӑнать). . . . — п.

**Хакĕ 12 пус.**